ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН НАЛУКСЕМПЕ ТЎЛЕВСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН САККУНЁСЕМПЕ РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН СУБЪЕКЧЁСЕНЕ ШАНСА ПАНĂ НАЛУК ЙЁРКЕЛЁВЁН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЫЙТĂВЁСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН НАЛУКСЕМПЕ ТЎЛЕВСЕМ ÇИНЧЕН КАЛАКАН САККУНЁСЕМПЕ РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН СУБЪЕКЧЁСЕНЕ ШАНСА ПАНĂ НАЛУК ЙЁРКЕЛЁВЁН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЫЙТĂВЁСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 2 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Раҫҫей Федерацийён налуксемпе тўлевсем çинчен калакан саккунёсемпе Раҫҫей Федерацийён субъекчёсене шанса панă налук йёркелёвён Чăваш Республикинчи ыйтăвёсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхён 23-мёшёнчи 38 №-лё саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашён ведомоçёсем, 2001, 42, 45 №-сем; 2002, 46, 49, 52 №-сем; 2003, 54, 57 №-сем;

2004, 59, 61 №-сем; 2005, 64, 65 №-сем; 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 87 №; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 9, 11 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 6, 11 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 18.1 статьян 1-мĕш пункчĕн 3-мĕш çум пунктĕнче "пурăнмалли пӳлĕмсем," сăмахсем хыççăн "пурăнмалли çурт-йĕр, нумай хваттерлĕ çуртсем, тара илнĕ çуртсем, сад çурчĕсем," сăмахсем хушса хурас, "пурăнмалли çурт-йĕр, сад çурчĕсем," сăмахсене кăларса пăрахас;

2) 19 статьяна çакăн пек çырса 3-мĕш пункт хушса хурас:

"3. Харпăр хăй фончĕн шутĕнчи харпăрлăх правипе тытса тăракан тата налук никĕсне кадастр хакĕ евĕр палăртнă пурăнмалли пӳлĕмсем, гаражсем, машина-вырăнсем тĕлĕшпе налук ставкине 0,3 процент чухлĕ палăртаççĕ, кадастр хакĕ кашнийĕнех 300 ытла миллион тенкĕпе танлашакан налук хумалли объектсемсĕр пуçне.";

3) 23 статьян 1.4-мĕш пунктĕнче "2023 çулта" сăмахсене "2023–2026 çулсенче" сăмахсемпе улăштарас;

4) 33 статьяра:

а) çакăн пек çырса çиччĕмĕш тата саккăрмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"Чăваш Республикинче пурăнакан, Украина, Донецк Халăх Республики, Луганск Халăх Республики, Херсон тата Запорожье облаçĕсен территорийĕсенчи ятарлă çар операцине (малалла – ятарлă çар операцийĕ) хутшăнакан (хутшăннă), Раççей Федерацийĕн Президенчĕн "Раççей Федерацийĕнче тулли мар мобилизаци тума пĕлтерни çинчен" 2022 çулхи авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 647 №-лĕ Указĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсене çар службине мобилизаци туса чĕннĕ, Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсенчи çар службине контрактпа иртекен, Федерацин "Чăваш Республикин çар комиссариачĕ" хысна учрежденийĕнчен ятарлă çар операцине хутшăнма янă Раççей Федерацийĕн гражданĕсене, çавăн пекех Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçса тăракан çар

чаçĕсенче çар службине контрактпа иртекен, Федерацин "Чăваш Республикин çар комиссариачĕ" хысна учрежденийĕнчен Раççей Федерацийĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракта тума янă çынсене, Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсенче службăра тăракан çар служащийĕсене, Раççей Федерацийĕн наци гвардийĕн çарĕсенче çар службинче тăракан тата полицин ятарлă çар званийĕллĕ çынсене 150 лаша вăйĕ таран (110,33 кВт таран) двигатель хăвачĕллĕ çăмăл автомобильсем тĕлĕшпе.

Çак статьян çиччĕмĕш абзацĕпе пăхса хăварнă налук çăмăллăхне физически сăпатсене, социаллă хŭтлĕх енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ тăратакан сведенисене тĕпе хурса, 2022 çулхи налук тапхăрĕшĕн 2023 çулхи чŭк уйăхĕн 15-мĕшĕчченхи, çавăн пекех 2023 çулхи налук тапхăрĕшĕн 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи вăхăта параççĕ.";

ă) çиччĕмĕш–тăххăрмĕш абзацсене тивĕçлĕн тăххăрмĕш – вун пĕрмĕш абзацсем тесе шутлас;

5) 39 статьяна çакăн пек çырса 2.10-мĕш пункт хушса хурас:

"2.10. Уйрăм предприниматель налук хумалли патент тытăмĕпе усă курса пурнăçлакан предприниматель ĕçĕ-хĕлĕн çак статьян 2-мĕш пунктĕнче кăтартнă кашни тĕсĕ енĕпе çулталăкра илме пултаракан чи пысăк тупăш виçине Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 346[43] статйипе килĕшŭллĕн тивĕçлĕ календарлă çул валли палăртнă коэффициент-дефлятор виçи чухлĕ çуллен индексацилемелле.";

6) 39.1 статьян 1.4-мĕш пункчĕн пĕрремĕш абзацĕнче "базисене туса хурассипе" сăмахсене "базисене туса хурассипе тата усă курассипе" сăмахсемпе улăштарас;

7) 47 статьян 1-мĕш пунктĕнче "2020–2023 çулсенче" сăмахсене "2020–2030 çулсенче" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тŭлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2019 çулхи нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 4 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2019, нарăс уйă-

хĕн 20-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ) 2 статйин 4-мĕш пайĕнче "2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă курмаççĕ" сăмахсене "2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усă курмаççĕ" сăмахсемпе улăштарас.

3 статья

1. Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕсĕр пуçне, 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, анчах та ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртиччен маларах мар тата тивĕçлĕ налук енĕпе черетлĕ налук тапхăрĕн пĕрремĕш числинчен маларах мар вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕ çак Саккуна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет тата транспорт налукне 2022 тата 2023 çулсенчи налук тапхăрĕсемшĕн шутласа палăртассипе çыхăннă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
74 №